# Уяв парнелерĕç






Интернатри тăлăх ачасен "Улыбка" ятлă ушкăнĕн лару-тăрăва улăштарма, савăнма ялан май пур-и? Сайра-хутра кăна çав. Нумаях пулмасть хулапа район администрацийĕ çумĕнчи çамрăксемпе тата çула çитмен ачасемпе ĕçлекен комисси вĕсене Çамрăксен çуртне чĕнчĕ. Унта вĕсем предпринимательсем пулăшнипе ыркăмăллăх акцине ирттерчĕç. Хитре илемлетнĕ сценăллă залра ачасене хатĕрленĕ сĕтелсем кĕтсе илчĕç. Улма-çырла, мороженăй, уçăлтаракан шĕвексем, канфетсемпе тортсем, чей, ырă кăмăллă хуçасем çав кун хăйсен хăнисене мĕнпе кăна сăйламарĕç пулĕ. Унăн официаллă пайне администраци пуçлăхĕн çумĕ Н.Х.Абдуллин уçрĕ. Ун хыççăн уява ертсе пыракан Н.Селуянова çак куна ятарласа хатĕрленĕ концерт программин пĕрремĕш номерне пĕлтерчĕ. Чи малтан литература монтажĕ пулчĕ, унта ачалăх, пĕрремĕш юрату тата туслăх çинчен сăвăсем янăрарĕç, ачасене аслă класра вĕренекен Луиза тутар ташшине ташлани тата юрлани - вăл гитара та каларĕ - уйрăмах килĕшрĕ. Унтан ачасем С.Маршакăн юмах тупсăмне тупрĕç, çаврăнăçулăх енĕпе ăмăртрĕç, хăйсем сăвăсем вуларĕç, ташларĕç, юрларĕç, ваттисен сăмахĕсене аса илчĕç, пантомимăсем те кăтартрĕç. Вĕсем вăтанмарĕç, хăйсене ирĕккĕн тыткаларĕç, вăйăсене активлă хутшăнчĕç, çавăнпа та кашни тивĕçлипех çемçе тетте парне илчĕ. Дискотека хыççăн "Экспресс-фотона" çул тытрĕç, унта ку чухнехи техникăна ĕçре курма кăна мар, çаплах компьютер вăййисемпе кăмăл туличчен выляма май пулчĕ.

- Çак уява йĕркелекенсене пурне те питĕ пысăк тав, - терĕ шкул-интернат директорĕн çумĕ Н.З.Минибаева. Ачасем çакăн пек уявсене питĕ юратаççĕ. Концерт, парнесем, музыка, çынсемпе тĕл пулни - çаксем пурте нумайлăха асра юлĕç. Юлашки вăхăтра пирĕн "Улыбка" ушкăна - кунта вара тăлăх ачасем - общественность пысăк тимлĕх уйăрать. Ку вара питĕ кирлĕ.

Ачасем уявран кăмăллăн саланчĕç. Ăна "Риф", "У Сони", "Новинка" магазинсен (Л.Юсуповапа А.Мамулашвили предпринимательсем), уйрăм предпринимательсем "Беленький" (Долгов), Юданов, "Визит" (Захаров) тата ТОО "Фортуна" активлă пулăшнипе йĕркеленĕ. "Фортунăри" предпринимательница Е.Сибагатуллина ачасем валли (запас) тата тепĕр сюрприз хатĕрленĕ: "Улыбка" ушкăнри ачасем çу тăршшĕпе эрнере пĕр хутчен пилĕк киоскран пĕринче мороженăй çиме пултараççĕ. Паллах, тӳлевсĕр ĕнтĕ.

Уяв питĕ ăнăçлă иртрĕ, çакăн пеккисем ытларах пулсанччĕ. Ку ачасем хăйсен пурнăçĕнче савăнăç курман вĕт, вĕсем ашшĕ-амăшĕсем мĕнле ачашланине, шелленине пĕлмеççĕ, çавăнпа та вĕсене пулăшу питĕ кирлĕ. Анчах та манăн пуçа çакăн пек шухăш пырса кĕчĕ. Акă, вĕсем ыран интернатран сывпуллашса тухса кайсан вара вĕсене малашне мĕн кĕтет-ха? Вĕсен пурнăçĕнче тата мĕнле те пулин çакăн евĕрлĕ, çутă та хаваслă уяв пулĕши?

Т.АЛЕКСЕЕВА.
Н.АЗИЗОВ
сăнӳкерчĕкĕсем.





---

## Çулсем иртнĕ хыççăн

**Астăвăм**

Чăнах та астăвăм - çĕр тĕслĕ, асран яни вара тĕссĕр. Мария Герасимовна Фомичева ман пата хулари ветерансем пухăннă çĕрте пычĕ, унăн ашшĕ Днепр юханшывĕн сылтăм çыранĕнче пулса иртнĕ çапăçура 1943 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнче пуçне хуни çинчен каласа пачĕ. Вилнĕ хут килнĕ, ун чухне вăл икĕ çулта çеç пулнă. Мĕн чухлĕ вăхăт иртнĕ унтанпа... Ывăлĕпе хĕрĕ те ӳссе çитĕннĕ, хăй те пенсие тухнă, çапах çак çулсем хушшинче Мария Герасимовна ашшĕн вил тăприне шыраса тупас ĕмĕте пăрахман. Пĕлтĕр унăн ĕмĕчĕ пурнăçланнă - Асăну кĕнеки пулăшнă, ăна Самар хулинче кăларнă. Пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕнче вара вĕсем Мария Николаевна Колотухина пĕртăванĕпе пĕрле Харькова кайма билет илнĕ, унтан вара Харьковри шăллĕн машинипе Днепропетровск облаçне, Верхнеднепровск районĕнчи Днепрокаменка ялне шырама тухса кайнă - ун чухне вĕсем пине яхăн километр иртнĕ. Ялĕ пысăк иккен, вил тăприне те тирпейлĕ пăхса тăраççĕ. Юрлă пулин те, паттăрла пуçĕсене хунă салтаксем кунта пысăк хисепре пулни курăннă. Пилĕк пин çынна пытарнă тăванлăх масарĕ яла пырса кĕнĕ çĕрте вырнаçнă. Симĕс хырсем çилпе шавлаççĕ, салтак пуçне тайса тăрать, сивĕ мрамор çинчи хурлăхлă список... Акă вĕсен ашшĕ - Герасим Николаевич Петров. Ун чухне Мария Герасимовна чĕркуçленсе ашшĕнчен ун патне çитмелли çулĕ вăрăм пулнăшăн каçару ыйтнă. Куççульне тытса чармасăр Тăван çĕршыв саламне каланă, постамент çине хĕрлĕ гвоздика çыххи хунă. Хĕллехи кун кĕске, хăвăрт тĕттĕмленнĕ, çапах та унăн чунĕ çак самантра çуталса кайнă пекех туйăннă - вун-вун çул иртнĕ пулсан та, вăл Çĕнтерӳшĕн хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр пуçне хунă ашшĕне шыраса тупнă-çке.

Çав кун вĕсем ял Советĕнче те пулнă. Унта председатель инçетри Тутарстанран килнисене çак вырăнсенче иртнĕ хаяр çапăçусем çинчен тĕплĕн каласа панă. Кунта Совет Союзĕн 43 Геройне пытарнă. Йĕрлевçĕсем тата вилнĕ 300 çыннăн ячĕсене палăртнă.

Мария Герасимовна Фомичева ашшĕн вил тăприне шыраса тупма пулăшакан çынсене тав тăвать. Çаплах Днепрокаменка ялĕнче пытарнă салтаксен тăванĕсене мĕн курнине каласа пама хатĕр. Унăн адресне редакцире ыйтса пĕлме пулать.

Т.НАЗАРОВА.



---

## Чи кирлĕ професси

Ирина Дмитриевна Манзуркина (Ярмушкина) пирĕн районти Якаел ялĕнче çуралнă, çар врачĕ, хăйĕн ĕçĕ çинчен иккĕмĕш тĕнче вăрçинче аманнисене сиплени çинчен каласа паратчĕ. Салтаксен сухалĕсем ӳссе кайнă, юнлă, нимĕçсене çилленнĕ, суранĕсем чăтма çук ыратнипе кăшкăрнă. Кайран, кăшт лăплансан вара вĕсем врачсенчен каçару ыйтса, пулăшнăшăн тав тунă.

Врач пурне те пулăшать: хулигана та, алкоголика та, тăшмана та. Ку вăл çавăн пек ырă кăмăллă професси.

Кăçал мана хамăрăн медицина пунктне кĕме тӳр килчĕ, унта Гульзида Масхудова ĕçлет. Тараватлă та тимлĕскер, вăл ваттисемпе те, çамрăксемпе те пĕр чĕлхе тупма пултарать. Канаш, пĕрремĕш медицина пулăшăвĕ парать. Манпа та çапла пулчĕ: машина шырама васкавлă тухса чупрĕ те мана Мамăкри больницăна ăсатрĕ. Больница территорийĕнчех эпĕ кунта ырă кăмăллă çынсем ĕçленине туйрăм. Валентина Большакова чи малтан, эпĕ мĕнле çитни çинчен ыйтса пĕлчĕ. (Пирĕн патра транспорт тупма яланах йывăр). Елена Николаевна Разжавина мана чир пуçламăшĕ çинчен лăпкăн ыйтса пĕлчĕ, юн пусăмне виçрĕ, мĕнле эмелсем ĕçнине ыйтрĕ те вăйлисене организм йышăнмасан чи пĕчĕк витĕм кӳрекен таблеткăсенчен тытăнмалли çинчен ăнлантарчĕ. Регистратура ĕçченĕ Валентина Федоровна Ковшова мана больницăра койка çине выртсах сипленме хистерĕ.

Сергей Николаевич Большаков хирург çинчен те ырă сăмахсем кăна калас килет. Вăл яланах лăпкă та тараватлă. Çак пахалăхсене вăл хăйĕн коллективĕн членĕсене те вĕрентет. Ку вăл чирлисемшĕн чи лайăх эмел. Больницăран чĕрĕлес шанăçпа тухса каятăн.

Медиксене çирĕп сывлăх, ĕçре, пурнăçра ăнăçлăхсем, телей сунатăп, çынсен сывлăхне яланах çапла сиплĕр.

М.ЕГОРОВА.
Бутаиха поселокĕ.

---

## Тăрăшуллă ĕçчен

Маларах пичетре предприятисемпе учреждениссенче тăрăшса ĕçлекенсем çинчен часчасах çыратчĕç. Юлашки вăхăтра çавăн пек материалсем район хаçатĕнче сайра тĕл пулаççĕ.

Эпĕ Нурлат хулинчи 2-мĕш çыхăну уйрăмĕн начальникĕ Рамиля Салиховна Биктимирован ĕçне палăртас тетĕп. Кунта вăл 1991 çултанпа, çыхăнура ĕçленин пĕрлехи стажĕ 12 çул ытла шутланать.

Вăл тӳрĕ кăмăлпа вăй хурать, хăйĕн ĕçне юратать, çынсемпе те тараватлă, çавăнпа та çыхăну уйрăмĕнчен тухса кайнă чухне ăна пурте "тавтапуç" теççĕ.

Кунта хаçат-журнала та çулсерен активлă çырăнтараççĕ.

Почтальонсен туслă коллективĕ хаçат-журнал çырăнса илекенсене периодика изданийĕсене хăть мĕнле çанталăкра та вăхăтлă çитерме тăрăшать. Вĕсем пурте тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ.

Июнĕн 12-мĕшĕнче Рамиля Салиховна хăйĕн юбилейне паллă турĕ. Ăна çирĕп сывлăх, телей, ĕçре малашне те ăнăçлăхсем сунас килет.

И.ЕРЕПОВ.

# Тĕшĕнчен тытăнса панулми таран

Кунта çуркунне, кăвайт çуннин шăрши кĕнĕ тата улмуççисемпе чие çеçкисем шап-шурă чечеке ларнă вăхăтра килсен аванрах пулĕ. Тепĕр тесен, кунта ĕçлекенсем çак илемлĕхе тахçанах хăнăхнă ĕнтĕ, вĕсем кулленхи ĕçсене пурнăçлаççĕ. Сăмахран, ĕç укçи хăçан парасса кĕтеççĕ е аванс илнипех çырлахаççĕ, кăçал пуçлăхсем солярка тупайĕç-ши тата сетьри газ кĕртĕç-ши тесе пăшăрханаççĕ.

- Пирĕн хуçалăх тупăшлă пулин те , "чĕрĕ" укçа курмастпăр тесен те юрать. Сăмахран, ассоциацисем иртнĕ çулах хунавсем илсе кайрĕç, вĕсенчен чылайăшĕ вара вĕсемшĕн халĕ те тӳлесе татман-ха. Эпир нимĕнле бартера та хирĕçлеместпĕр - вăхăчĕ ун пек мар. Пурăнас тесен, халь пурне те çаврăнăçуллăрах пулма тӳр килет, - тет Уксăмлăри улма-çырла питомникĕн директорĕ Н.П.Сафандеев.

Ытти çĕрти пекех, кунта та укçа, çунтармалли-сĕрмелли материалсем, запас пайсем, çĕнĕ техника çитмест. Пурăнмалли çуртсем те кивелнĕ - 5-6 çĕнĕ çурт хăпартсан питĕ лайăх пулмалла, анчах та материалсемшĕн тата строительсене мĕнпе тӳлесе татмалла? Улма-çырла питомникĕ пенси фондне, çаплах территорири больница кассине кивçене кĕнĕ - парăмçăсем те хăйсен сăмахне тытаймаççĕ, вĕсем панă пулсан, çак парăмсене тӳлесе татма çитнĕ пулĕччĕ, налук та чылай пухăннă. Кĕскен каласан, пур çĕрти пекех, кунта та укçа-тенкĕ çитмест. Анчах та кунта укçа çуккине пăхмасăр, тăрăшса ĕçлеççĕ. Улма-çырла питомникĕнче пĕрчĕллĕ культурăсем те акса ӳстереççĕ - тырă упрамалли кĕлетсем тăваççĕ, социаллă сферăна аталантарассишĕн тăрăшаççĕ, газификацилес ыйтăва та пысăк тимлĕх уйăраççĕ.

Улма-çырла питомникĕн ĕçĕ сезонлă тесе шутлакансем вара йăнăшаççĕ. Кунта ĕç календарĕ питĕ çирĕп. Январь уйăхĕнче улма-çырла йывăççисен тураттисене сыпаççĕ - ку ĕçе хĕрарăмсем пурнăçлаççĕ, март уйăхĕ çывхара пуçласан вара удобрени турттараççĕ, кайран ака вăхăчĕ те çитет. Халь акă шăвармалла, çумламалла, апатлантармалла, ретсем хушшине ĕçлесе хатĕрлемелле, утă çулмалли вăхăт та çитрĕ, унтан тырпул пухса кĕртмелле, кĕркунне вара, ноябрь уйăхĕччченех хунавсем кăларса сутмалла. Çапла, ĕçĕн вĕçĕ-хĕрри те çук, çавăнпа та коллектив членĕсене февраль уйăхĕнче кăна отпуск параççĕ.

Улма-çырла питомникĕнче тĕрлĕ сортсем пур: улмуççисем - "московская грушовка", "зарянка" , "боровинка", "башкирская красавица", çуллахи, хĕллехи - "антоновка", "ренет Поволжья" тата ыттисем, слива - "евразия", "жигули" тата "мирная", чие - "уральская рябиновая", "маяк" тата "незябка", груша - "Мальвина" тата "тонковетка" - кăмăла каяканнине суйласа ил... Çаплах виктори, хурлăхан - "минай Шмырева", "сеянец голубки" пур, хура пилеш икĕ гектара яхăн, хăмла çырли гектар çурă йышăнать. Лартмалли материалсем туянма кунта хамăрăн районпа хулара пурăнакансем çеç килмеççĕ (юлашки çулсенче халăх хунавсем сахалрах туянни палăрнă), Уксăмлăри улма-çырла питомникĕпе Пĕкĕлмепе Анат Камăри тата Тутарстанти ытти районсен пахчаçисем те, Пушкăртстантисем те çирĕп çыхăну тытаççĕ.

Эпир питомникра пулнă кун ĕç хăйĕн черечĕпе пыратчĕ. Урăхла мĕнле-ха, çынсем хăйсен ĕçне пĕлеççĕ пулсан, ăна тăрăшса пурнăçлаççĕ.

**Т.АЛЕКСЕЕВА.**

• **01 пĕлтерет**

## Пушартан сыхламалла

1997 çулта районти ял хуçалăх производствин объекчĕсенче 5 пушар пулнă, вĕсем 1 пин те 580 тенкĕлĕх (çĕннипе) сиен кӳнĕ. Вуткăварта 1 объект çунса кайнă. Республикăра электроустановкăсен техника шайĕ начар пулнипе пушарсем чакмаççĕ. Электрооборудованипе усă курмалли техника правилисене пăснипе 1997 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнче Çарăмсан районĕнчи "Фрунзе" КП пушар сысна амисен витине сиенленĕ, вутра 154 пуç çура вилнĕ, 7 пин ытла тенкĕлĕх сиен кӳнĕ.

Уй-хирте тухăçа пухса кĕртнĕ вăхăтра та пушарсен шучĕ чакмасть. Пĕлтĕр августăн 30-мĕшĕнче ачасем вутпа асăрханусăр пулнипе "Нижнекамскшина" акционер обществин хушма хуçалăхĕнче 30 гектар тулă тĕпренех çунса кайнă. Çапла майпа, пушар 3 пин тенкĕлĕх сиен кӳнĕ. Ялсенче пушар час-часах пулнине ял хуçалăх предприятийĕсемпе организацийĕсен ертӳçисем пушар хăрушсăрлăхĕн требованийĕсене япăхлатнипе, ĕç дисциплини начар пулнипе тесе ăнлантарма пулать.

Пушар пулнă ял хуçалăх объекчĕсене пушар дисциплинин шайне тишкерсе тухни çакна палăртнă: пушар хăрушсăрлăхĕн шайĕ пушарччен те лайăхах пулман.



Пушар пулнă объектсенче пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăснă. Вĕсене вут-çулăма сӳнтермелли ансат хатĕрсемпе те тивĕçтермен, шыв та пулман. Ирĕклĕ пушар ĕçне начар йĕркеленипе, çулсем начар пулнипе, ял хуçалăх предприятийĕсен пушар деповĕсенче телефон точкисем пулманнипе пушара вăхăтлă сӳнтерме май çук.

Хулари тата районти ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисен агропромышленность комплексĕн объекчĕсене пушартан хӳтĕлессине вăйлатас, ял хуçалăх объекчĕсене пушартан сыхлас тĕллевпе ытларах пикенсе ĕçлемелле. Хресченсен хуçалăхĕсен "Киклĕ", "Комбайн", "Çуткӳл", "Сĕнче" ассоциацийĕсен, "Лесная Поляна" ООО, Агропромбанкăн хушма хуçалăхĕн ертӳçисене ДПО членĕсене пушар техникипе талăкĕпех дежурство йĕркелеме ыйтатпăр. Çаплах выльăх апачĕ хатĕрленĕ тата тырпул пухса кĕртнĕ тапхăрта пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерессине тĕрĕслессине йĕркелесе ямалла.

**Н.ЗАХАРОВ,**
**Нурлатри ПЧн Госпожнадзор начальникĕ.**

# "Кăмăл туличчен шыва кĕрĕр!"

## - ирĕк пачĕ районти санитари врачĕ И.В.Андаров.

***Çанталăк чăтма çук шăрăх. Хĕвел çинче пиçнĕ çынсемшĕн шывран лайăхраххи мĕн пултăр? Паллах, пурте ăçта çырма пур çавăнта васкаççĕ, кӳлĕ, пĕве хĕрне пулин те. Шыва кĕрсен вара татах пурăнас килет. Çавăнпа халь шыв хĕрринче çынсем питĕ нумай. Çакăн пек ыйту тухса тăрать: шыв таса-и? Çакăн çинчен эпир госсанэпиднадзор центрĕн тĕп врачĕпе И.В.АНДАРОВПА каласрăмăр.***

**- Ильяс Вазыхович, шыва кĕме уйăрнă вырăнсем мĕнле те пулин требованисене ответлемелле пулĕ?**

- Паллах. Сулхăн тата хывăнмалли вырăнсем пулмалла, çӳп-çап тăкмалли ятарлă савăт, туалет пулмалла, çаплах территорие хăйăр тăкмалла. Çакăн пек тăвас тесе самоуправленин вырăнти Совечĕсен тăрăшмалла. Шел пулин те, пирĕн патра шыва кĕмелли вырăнсене оборудованилессине тимлĕх уйăрмаççĕ. Пирĕн служба, тĕпрен илсен, коммуналлă гигиена пайĕ, шыв çăлкуçĕн, çырмасенчи шывăн тасалăхне кăна тĕрĕслет.

**- Çак мероприятисем çинчен каласа парăр-ха?**

- Вунă кунра пĕрре эпир шыври халер чирне тĕрĕслетпĕр. Пирĕн республикăри юханшывсем хăрушлăх кăларса тăратмаççĕ пулин те, 1997 çулта вĕсенче 91 культура палăртнă, вăл ерекен чир пекех пулнă. Çавăнпа та тĕрĕслени сиен кӳместь. Пирĕн патра 50-60 тĕрлĕ анализ илеççĕ. Çавăнпа та пирĕн район территорийĕнчен юхса иртекен Çарăмсан, Хăнтăрча, Сĕнче юханшывсенче ку тĕлĕшпе хăрушлăх çук. Унсăр пуçне, уйăхра пĕрре шыва химипе бактериологи анализĕ тăватпăр. Çакăн пек анализ тума кăçал эпир шыва 25 хутчен тĕрĕслеме илтĕмĕр. Шывра патогенлă микрофлорсем, пыршă чирĕсен микробĕсем мĕн чухлĕ пулнине палăртнă. Уйрăмах Çарăмсан юханшывĕ хĕрринчи "Заречный" лагерь вырнаçнă çĕрте тĕплĕн анализ тăватпăр. Результатсем санитарипе гигиена нормисемпе килĕшсе тăмасан, эпир ун çинчен тӳрех вырăнти хаçат урлă пĕлтеретпĕр. Телее, ун пекки пирĕн патра халлĕхе çук-ха. Çарăмсан - таса юханшывсенчен пĕри. Тĕрĕсрех каласан, вăл пирĕн территори витĕр юхса тасалать. Çакна пирĕн районта шыв тăракан вырăнсене пысăк тимлĕх уйăрнипе ăнлантарма пулать. Сăмахран, эпир сысна комплексĕн, сахăр заводĕн фильтрлакан хирĕсене икĕ эрнере пĕрре тĕрĕслетпĕр, унта йĕрке тăвас тесе тăрăшатпăр. Ялсенче çак требованисене пурнăçлама самоуправленин вырăнти Совечĕсен ертӳçисене хушатпăр, пурнăçламаннисене явап тыттаратпăр. Шыв тăракан вырăнсене тата территорисене варланăшăн çулсерен 11-13 явап тыттартпăр, çав шутра предприятисен ертӳçисене те штраф тӳлеме тӳр килет. (Сăмахран, иртнĕ çул Уксăмлă çырмине нефть юхса кĕнĕ тĕслĕх пулнă). Ун пек штрафсем вара пĕчĕккĕ мар. Кăçал Хăнтăрча юханшывне тислĕк тăкнăшăн самоуправленин Çĕнĕ Иглаел Совечĕн председательне штраф хунă. 35-мĕш арман территорийĕнче Çарăмсан юханшывне варланăшăн айăплисем те явап тытнă.

Çапла майпа шыв тăракан вырăнсем тасалаççĕ. Анчах та пирĕн юханшывсен тасалăхĕ хамăртан килни çинчен манмалла мар.

Юханшыв хĕрринче пушă кĕленче савăтсем пăрахса, хăйсем хыççăн çӳп-çап купи хăварса, вĕсем тавралăха варалаççĕ.

**- Ильяс Вазыхович, юханшывсем çинчен каласа парса шыва кĕрекенсене лăплантартăр. Анчах та кӳлĕсемпе пĕвесем те пур вĕт-ха...**

- Искусственнăй кӳлĕсенче шыва кĕме хушмастпăр. Мĕншĕн тесен унта шыв тасалăхĕ нормăпа килĕшсе тăмасть. Чăваш Менчи патĕнчи пĕвере ачасем шыва кĕнине час-часах курма пулать - кунта вара шыва кĕме пачах юрамасть! Юлашкинчен тата. Ачăрсем хăрушлăха кĕрсе ан ӳкчĕр тесе тăрăшăр. Шыв вăл киленӳ кăна мар, хăш-пĕр чухне инкек те илсе килет. Çавăнпа та ачасене шыва кĕме хăйсене кăна ан ярăр.



**Ялсене - газ**

## Плита çинче те, кăмакара та

Вырăс Менчи ялĕнче пурăнакансем кӳршĕсене - Хуралту çыннисене çукçук та ăмсанатчĕç.Лешсем вĕт-ха тахçанах вутă, кăмрăк хатĕрлес нушаран хăтăлнă. Акă тинех, Акатуй умĕн вĕсен урамне те уяв çитнĕ: патшалăх комиссийĕн членĕсем ирĕк панипе 11 çурта газ янă.

Тулли мар яваплăх тытакан "ЭСКА" фирма урамсенче газопровод хывас, çуртсене пăрăхсем кĕртес тĕлĕшпе пысăк ĕç пурнăçланă. Хуçалăх ертӳçисем те подрядчиксене ăнăçлă вăй хума пĕтĕм условисем туса парас тесе тăрăшнă. Ĕçлĕ комисси палăртнă туса çитереймен ĕçе вĕçлеме хуçалăха мĕн чухлĕ вăй хума тивнĕ! Ку вара хресченсен хуçалăхĕсен Кузнецов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕн çĕнĕ ертӳçишĕн хăйне евĕрлĕ тĕрĕслев пулнă. Телее, çамрăк ертӳçĕ çак экзамена ăнăçлă тытнă, çуртсенче çуталнă пĕрремĕш сенкер çутăсем çĕнĕ ертӳçе шанма пулнине çирĕплетеççĕ пулĕ. Вырăс Менчинче çутçанталăк газĕпе газ плитисене çеç мар, хăшпĕр çуртсенче каланккă кăмакисене те çыхăнтарнине палăртса хăвармалла. Маларах та çырнăччĕ эпир, каланккăсем хаклă газ хуранĕсемпе ăнăçлă тупăшма пултараççĕ.

Хальхи вăхăтра пурте кăна ятарлă кăмакасем туянма пултараймаççĕ, хăшпĕр çуртсенче вĕсем вара кирлех те мар.

## Шыв айěнчи склад

Яппунсене тěнчери чи ăслă çынсем теççě. Çаплах-ши ку? Вěсем Бива кÿлли тěпěнчи шыв температури ялан пěр улшăнми сивě тăнипе хăйне евěрлě усă кураççě: кÿлě тěпěнче рис упрамалли склад майлаштарнă. Ятарласа хатěрленě пластика миххисене рис тултараççě те шыв тěпне антараççě. Вăл кăвакармасть те, ăна хурт-кăпшанкă та тапăнмасть. Шыв айěнче рис пахалăха çухатмасăр нумай вăхăт упранать, унран пěçернě апат-çимěç яланхи меслетпе упракан риспа пěçерниничен чылай тутлăрах та, техěмлěрех те иккен.

*Хăна юррисем*

## Виличченех пěрле пурăнăпăр

**Арча усламăç килет - куратăр-и,**
**Тарай тутри сутать - илетěр-и?**
**Тăванăрсем килеç - куратăр-и,**
**Ăшă кăмăлăрпа кěтетěр-и?**

**Ылтăнпала кěмěл пухнă çěре**
**Çитсе курнă çынсем мухтаççě.**
**Çул çÿренě чухне ыйтса пěлтěм:**
**Сире пěлекенсем мухтаççě.**

**Чут каçаттăм юханшыв урлă**
**Вěлтěртетсе тăран çулçăшăн.**
**Чут сивнеттěм, тăванăм, сантан**
**Çич ютăн сивě сăмахěпе.**
**Хамран сивě сăмах илтмесессěн**
**Çич ютран илтнипе ан сивěн.**

**Эс ан пăрах мана ватăличчен,**
**Эп пăрахмăп сана виличчен.**
**Виличченех пěрле пурăнăпăр,**
**Вилсен пуçлă-вěçлě выртăпăр.**

**Сирěнех умăрта улма йывăçě -**
**Ыр ут кăкармашкăн тивěçлě.**
**Ěçрěмěр, çирěмěр, савăнтăмăр -**
**Юрласа хăварма тивěçлě.**

**Пухса йěркелекенě Е.ИЛЮШКИНА.**

# Футбол Футбол Футбол

## Иккěмěш ушкăнра вылярěç

Нурлат хулин пухнă команди (вылякансем 1985-86 çулсенче çуралнисем) июнěн 3-мěшěнчен тытăнса 7-мěшěччен Пěкěлме хулинче иртнě зонăри республика ăмăртăвěсенче пулчě. Кунта Анат Кама, Заинск, Чистай, Альметьевск, Джалиль, Нурлат тата Пěкěлме хулисен футболисчěсем хутшăнчěç.

Пирěннисем иккěмěш ушкăнра вылярěç. Пěрремěш вăйăра нурлатсем хуçасене 0:3 шутпа выляса ячěç. Тата икě вăйă результачě - Нурлат - Анат Кама (2:2), Джалиль - Нурлат (0:3). Мечěксене Д.Киселевпа Р.Гилязев тапса кěртрěç.

**Ш.ТЮКАЕВ.**

## Анат Камăра футбол

Çу çитрě, йăлана кěнě тăрăх, пирěн районти çамрăк футболистсем Тутарстанри тěрлě хуласене футболла выляма зонăри тата финалти ăмăртусене каяççě.

Çапла, июнěн 3-мěшěнчен тытăнса июнěн 7-мěшěччен Анат Камăра кěçěн ушкăнрисен зонăри ăмăртăвěсем иртрěç. Пурě республикăри çичě хулари командăсем хутшăнчěç. Кусем вěсем Анат Кама, Çыранçи Чаллă, Джалиль, Заинск, Альметьевск, Чистай хулисенчи командăсем. Пěрремěш виçě команда тата пирěн А ушкăн йěркелерěç, ыттисем виççěн - В ушкăн. Пирěн 2,3,4-мěш номерлě шкулсен футболисчěсенчен тăракан команда çивěч кěрешÿре 2:1 шутпа Çыранçи Чаллă командине выляса ячě, пирěн енчен мечěке Марс Шайдуллин (4-мěш номерлě шкул) тапса кěртрě. Кайран çаплах Анат Камăри çамрăк футболистсене 3:1 шутпа выляса ячěç (мечěке 3-мěш номерлě шкулти Максим Яшмурзин тапса кěртрě). Джалиль командине вара 3:0 шутпа çěнтерчěç, çапла майпа хăйсен ушкăнěнче пирěннисем 3-мěш вырăна тухрěç. 5-мěш вырăншăн иртнě вăйăра пирěн команда Заинскри “Спартак” командăна çěнтерчě. Стас Гаврилов, Саша Калуков, Вова Николаев, Витя Демидов ( 4-мěш номерлě шкул), Денис Киргизов, Саша Соловьев (2-мěш номерлě шкул) хăйсем лайăх вылянине кăтартрěç. Хамăрăн футболистсене юратнă вăйăра ăсталăх ытларах пухма, республикăри ăмăртусенче ăнăçлăхсем тума сунатпăр. Район администрацине ДЮСШ футболисчěсене пурлăх енчен пулăшнăшăн тав тăватпăр.

**В.ТРОФИМОВ,**
4-мěш номерлě шкулти физкультура учителě.

## Финала хутшăнма путевка илчěç

Июнěн 10-мěшěнчен тытăнса 15-мěшěччен Менделеевск хулинче “Сăран мечěк” парнене илессишěн зонăри футбол ăмăртăвěсем иртрěç. Ăмăртусене Анат Кама, Елабуга, Чистай, Пěкěлме, Альметьевск, Менделеевск тата Нурлат хулисен командисем хутшăнчěç.

Шăпа янă хыççăн пирěн команда пěрремěш ушкăна лекрě. Пěрремěш вăйăра пирěн команда Альметьевск хулин командипе тěл пулса 4:0 шутпа çěнтерчě. Иккěмěш вăйăра Анат Кама командипе вылянă чухне никам та пěр мечěк те тапса кěртеймерě.



Хăйсен ушкăнěнче 1-мěш вырăн йышăнчěç те финалта хуçасемпе тěл пулса, вěсене 0:3 шутпа выляса ячěç. Вăйăсенче А.Ундалов, М.Мирзазянов, О.Сидюков, Р.Хусаинов, Д.Кистенев палăрчěç. Пирěн команда республикăри финал ăмăртăвěсене хутшăнма тивěç пулчě. Вăл Джалиль хулинче июнěн 24-мěшěнчен тытăнса 29-мěшěччен иртě.

**Ю.КОЧЕТКОВ,**
ДЮСШри футбол вăййин тренерě.

## Пушар хăрушсăрлăхěн мерисене - пысăк тимлěх!

Администраци районта пурăнакансене çанталăк уяр тăнипе пушар тухас хăрушлăх питě пысăк пулни, уйрăм хуçалăхсенче тата производство объекчěсенче пушар часчасах тухни çинчен асăрхаттарать.

Çавăнпа та хресченсен хуçалăхěсен ассоциацийěсен, самоуправленин вырăнти Совечěсен ертÿçисен тата мěнпур граждансен çителěклě чухлě шыв хатěрлес тěлěшпе мерăсем йышăнмалла, ку тěллевпе çырмасене пěвелемелле, вăтам звенори специалистсем ял хуçалăх объекчěсенче талăкěпех дежурство тăрассине йěркелемелле, вěсене пушар сÿнтермелли хатěрсемпе (шывпа, огнетушительпе тата ыттипе) тивěçтермелле. Ăçта та пулин çунма тытăннине асăрхасанах Нурлата пушар хуралěн органěсене пěлтермелле: **ПЧ - 48 - 2-22-72, ВПЧ - 5-29-26.**

**Нурлат районěпе Нурлат хулин администрацийě.**

## Пěлтерÿсем

*Нурлат хулинчи пěр пÿлěмлě хваттере (пěрлехи лаптăкě 40 тăваткал метр) Самар хулинчи çавăн пеккипе улăштаратпăр е сутатпăр. Ленинградская урамěнчи 11-мěш çуртра 1998 çулхи июнěн 30-мěшěччен ыйтса, Самарти 39-05-92 номерпе июнěн 30-мěшě хыççăн шăнкăравласа пěлме пулать.*

* * *

*4-мěш номерлě шкул Руслан Николаевич Усманов ячěпе панă А 814005 номерлě çухатнă аттестата тěрěс мар тесе шутламалла.*

* * *

*Василий Александрович Толмачев ячěпе панă водитель удостоверенине тата тех. паспортта упакана 5-26-37 номерпе пěлтерме ыйтатăп. Тупакана парне кěтет.*

* * *

*5,5х5,5 тата 5,3х3,2 калăпăшлă пурасем сутатпăр. Хиртикÿл ялěнче Хайбулла Аглиуллинран ыйтса пěлмелле. Телефон: 2-33-90.*

* * *

*Аксури вăрман хуçалăхě Нурлат районěнче арболит, хăма-чус тавраш´есем, шăтăрнак, хăмасем, никěс блокěсем, тěрлě калăпăшлă пурасем, мунчара çăвăнмалли мунчала сутать, леçсе пама та пултарать. Укçа вырăнне апат-çимěç чекěсемпе жетонсем те илет. Телефонсем: 8-244, 2-14-32, 2-12-48.*

* * *

*Чугун çул поселокěнчи ача-пăча сачě патěнче мěнпур енчен хăтлă икě пÿлěмлě хваттер, 6,5х3,5 калăпăшлă çуна çинчи гараж сутатпăр. Телефон: 2-16-28.*

* * *

*Горький урамěнчи 21-мěш номерлě çурт сутăнать, мунча, нÿхреп, вите, çěр участокě пур. Телефон: 5-37-95.*

* * *

**Аэропорт çуртěнче ресторан уçăлнă, унта питě лайăх кухня пур, музыка тата дискотека. 11.00 сехетрен тытăнса 15.00 сехетчен, 19.00 сехетрен тытăнса ирхине икě сехетчен ěçлет.**

* * *

*Пěр пÿлěмлě хваттере икě пÿлěмлипе улăштаратпăр. Кăрмăш поселокěнче пулсан лайăх пулмалла. Телефон: 5-28-32.*

* * *

*Афган поселокěнче туса пěтермен çурт сутăнать, мунча пур. Ытти вариантсем те пулма пултараççě. 5-14-79 номерпе хăть хăш вăхăтра та шăнкăравласа пěлме пулать.*

***М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ěçнинчен тата табак туртнинчен пěр сеансра сиплет.***

***Пирěн патра кăна!***

***Сеанса пěтěмпех анонимлă ирттеретпěр. Сипленě чухне тăванěсем пулма пултараççě. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тÿлевсěр!***

***Сипленě кун, эрнекун, июлěн 3-мěшěнче районти культура çуртěнче 14 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпěр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январěн 16-мěшěнче панă.***

## Пěлтерÿсем

*“Нурлатри суту-илÿ бази” ОАО курттăмăн сутать:*

*- чăх пěççисем - хакě 10,50;*

*- тăварланă, шăнтнă пулă;*

*- “Красный Восток” сăра - 0,5 литр хакě 3,30;*

*- “Кристина” пылак шыв - 1,5 литр хакě 3,50;*

*- “Кока-кола”, “Спрайт”, “Фанта” - 0,33 литр, 0,5 литр, 1,25 литр, 2 литр;*

*- “Нарзан” минераллă шыв - 1,5 литр хакě 4,50.*

*Ырă сунса кěтетпěр.*

* * *

*1991 çулта туса кăларнă питě лайăх шайри ВАЗ-2121 сутăнать. Кушкăри телефонсем: 2-28-85 (килти), 2-22-87 (ěçри).*

* * *

*Чугун çул çинчи Пěкěлме ОРСěнче ěçлеме кондитер-повар кирлě.*

*Администраци.*

* * *

*Хула варринчи икě хутлă çуртри пěрремěш хутěнче виçě пÿлěмлě хваттер сутăнать. Телефон: 2-12-50.*

* * *

*“УАЗ-469” сутăнать. Телефон: 3-52-31.*

**Районта тухса тăракан “Дуслык” (“Туслăх”,”Дружба”) хаçат тата Нурлатри типографи коллективěсем редакцире ěçленě Антонина Абрамовна Пестова пенсионеркан ывăлě**
**АНДРЕЙ ГЕОРГИЕВИЧ**
**вăхăтсăр вилсе кайнипе унпа пěрле чун-чěререн хурланни çинчен пěлтереççě.**


Тěп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районěн администрацийěпе редакцин ěç коллективě

Хаçат эрнере виçě хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĚН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамě, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителě тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçěн пайě - 2-10-44, редактор заместителě, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжě енěпе ěçлекен заместителě - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжě енěпе ěçлекен заместителě - 2-10-44, ялхуçалăх пайě, промышленность, çырусемпе массăлла ěç пайě - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайě тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнě.

Регистрациленě номерě 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860. З. 2643